— Сентябĕрĕн 25-мĕш тĕлне авăн çапса, октябĕрĕн 1-мĕш тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтеретпĕр,— тесе ĕнентерет Тутаркас райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Моисейев йулташ. Анчах, ĕçсем сине тĕплĕн пăхсан, ăрасна тухать. Сентябĕрĕн 20-мĕшне Тутаркас районĕнчи колхозсенпе йĕкĕлоличниксем 78,3 процент авăн çапнă, кĕрхи çĕртме тумалли плана 14 процент çеç тултарнă. Мĕнле хăвăртлăхпа ĕçлет Тутаркас район? Ана çак цифрăсем лайăх сирĕплетсе параççĕ. Сентябĕрĕн 10-мĕшне Тутаркас районĕ 61,7 процент авăн çапнă, 5,8 процент кĕрхи çĕртме туна пулнă. Çапла вара вунă кун хушшинче авăн çапас хăвăртлăх 16,3 процентпа, кĕрхи çĕртме тăвасси 8,2 процент çеç ĕçнĕ. Çак хăвăртлăхсем Тутаркас райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕн самаçсене сирĕплетмеççĕ.

Йалхуçалăх ĕçĕсем колхозсенче мĕнле пынине илсе пăхăпăр. Районра „Хĕрлĕ çăлтăр", Молотав йăчĕпе тăракан колхозсем кăна кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Йăрославка, Иахаткасси, Ман Сентĕр, Шупуç йăлсоветсенчи колхозсем кĕрхи çĕртме тума пачах тытăнман.

Авăн çапас ĕç те çаплах йулса пырать. Районĕпе 11 йăлсоветра авăн çапса пĕтернĕ пулсан та, вĕсем МТС-не натурплатă тыррине парса татман. Ытти йăлсоветсем вара авăн çапмали плана 67 процентран мала тултарайман.

Çакна та палăртса хăварас пулать. Тутаркас районĕнчи колхозсенче выльăхсем валăри сĕткенĕ апат—силос хывса хăварасси пит йăпăх ĕçлеççĕ. Силос хывмали плана мĕн пурĕ те 14 процент кăна тултарнă. Районĕпе пĕр колхозра кăна—„Ирĕклĕх" колхозра 100 тонна силос хывса хăварса плана тултарнă. Ытти колхозсенче ку ĕç çав тери вăрахăн пырать. Сентябĕрĕн 10-мĕшпе 20-мĕшĕсенче 10 кун хушшинче силос хывас хăвăртлăх 1,1 процент анчах ӳснĕ.

— Пирĕн уполномоченнăйсем йăлсоветсенче, колхозсенче ĕçлеçĕç—тет райçĕрĕç пай пуçлăхĕ. Чăнах та вĕсем йăлсенче. Анчах, вĕсем хăйсене хушнă ĕçе вăхăтра туса пыни çук, вĕсен ĕçне никам та тĕрĕслемест.

Тутаркас районĕн йалхуçалăх ĕçĕсемпе йулса пырассине пĕтермеле. Партине совет организацийĕсен, çĕрĕç орăнĕсен, колхоз правленийĕсен кĕрхи ĕçсене вăхăтра вĕçлессишĕн пĕтĕм массăна мобилизацилемеле.

Калинин.

Хĕлĕ хатĕрленесси

ТĂВАЙ. Пирĕн районра выльăх-чĕрлĕх йышĕ хăвăрттăн ӳссе пырать. Çакăн пек йышлă выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма ăшă витесем, кирлĕ таран апат-симĕçсем хатĕрлемеле. Анчах, районри çĕрĕç орăнĕсем колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрленессине питĕ ĕнтĕлексĕр ĕçртсе, пулăшса пыраççĕ. Районри çĕрĕç пайĕ колхозсене 3 600 тонна силос хывса хăварма план панипех лапланса ларнă. Çав плана мĕнле пурнăçласа пынине выранă тухса тĕрĕслемест. Паянхи куна сине Тăрмăш колхозĕ 30 тонна, Лăчкасси—20 тонна, „Хĕрлĕ Сормăва"—12 тонна силос хывнисĕр пуçне ытти колхозсенче тытăнман та, çулçăла апат та хатĕрленмен. Районĕпе 100 лав çулçăла апат касса хатĕрдес вырăнне, пуçĕ те 60 лав çеç касса хатĕрленĕ.

Районра çурт-йĕрсем лартас ĕç те йулса пырать. Кăçал 1075 пуç лаша хупмалăх çĕнĕ вите лартма пăхнă пулсан, йăвăç кăларманнипе ĕç чарăнса тăрать. Çăлтуçĕнчи Кирав йăчĕпе тăракан колхозра сыснă вити лартма пуçланă икĕ çул çитет пулин те пайăнччен 25 процент çеç туса çитернĕ. Çавăн пекех Чапайĕв йăчĕпе тăракан таватă „Çăлтăр" колхозсенче те строительсĕва ĕçĕсем чарăнса тăраççĕ.

Тума тытăнă витесенче хĕле кĕреччен туса çитересех пулать. Районри организацисен колхозсенче тума пуçланă строительсĕвсене туса пĕтерме кирлĕ пулăшу памала.

В. Илйин.

Ăнлантарнă хыççăн

ИШЛЕЙ. Хăйма лакасси йăлсоветĕнче ВКП Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççи ĕçĕсем çинчен ĕççыннисене лайăх ăнлантарса параççĕ. Çакна май, Жданăв йăчĕпе тăракан колхоза ĕлечиличниксем 9 хуçалăх кĕçĕ. Йăлсоветра хуçалăхла политикăла ĕçсене пурнăçласси те лайăх пырать. Зайом укçи пухассине 89 процент тултарнă.

Агитаци ĕçне йĕркелемен çĕрте чылай ĕçсем кайа йулса пыраççĕ. „Çĕнĕ хунав", „Тивĕш", Ворошилăв йăчĕпе тăракан колхозсенче ку вăхăта çитсе те çилос хывман, авăн çапас ĕç те кайа йулса пырать. Кĕрхи çĕртме тума пуçăнман. МТ Станцине натурплатă парса татман.

Гер. Шчербаков.

Колхоза кĕреççĕ

ЙĔППРЕÇ. Чăваш Тимĕш йăлсоветĕнче ăнлантару ĕçне тус-пăмăсем кашни 10 кунĕ пуçне пĕр агитатăр çирĕплетнĕ. Вĕсем ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççинче ăшăннă сакăнсене çинчен тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

Çеççире ăшăннă сакăнсене ăнлантарса пана хыççăн, Чăваш Тимĕшĕнче 8 хуçалăх, Тăманлă Выселкинче 9, Ентрикĕнче 6, Асанкассинче 4, Клепкассинче 8 хуçалăх колхоза кĕнĕ. Районĕпе илсен çак куписенче колхоза кĕнисем 60 хуçалăхран иртеççĕ.

В. Вишневский.



Совет Сойузĕн хулисем тăрăх.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Киĕв хулинчи гостиницă „Гранд—Отель". Л. Великжанин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото)

Жалăбăсем çине чунсăрăн пăхакансем

Иĕпреç районĕнче ĕççыннисем жалăбисемпе ĕçлеççине чылай вырăна лартайман-ха. Кунта ĕççыннисем жалăбисем çине чунçăр, формальнă бюрократла пăхас йăла халĕ те пĕтсе çитмен. Ĕççыннисем жалăбисемпе ĕçлесси, уйрăмăнах райĕстăнкомра, райĕсрĕç, райçутĕç тата районри суту-илу пайĕсенче йăпăх тăрать.

Асăннă организацисенче ĕççыннисен жалăбисем 5—6 уйăх хушши тĕрĕсленмесĕр, пăхса тухмасăр выртаççĕ.

Районри „Колхоз пурнăçĕ" хаçат редакцийĕ 1938 çулти йăнăр уйăхĕнчен пуçласа сентябĕрĕн 15-мĕшĕччен райĕстăвкома ĕçлакорсем çырнă çырусемпе жалăбасене 15 йăнă. Вĕсенчен 10 жалăба халĕ те тĕрĕсленмесĕр выртаççĕ. Кунта ĕççыннисен жалăбисемпе ĕçлеме райĕстăвком председателĕн заместителне Семенăв йулташа уйăрнă пулнă. Анчах вăл çав ĕçпе ĕçлемен, жалăбасене илнĕ те „вăхăт çук", тесе шкапа хунă.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕççыннисен жалăбисемпе ĕçлес ĕçе йăлтах арканса йăнă. Райçĕрĕç пайне районри „Колхоз пурнăçĕ" хаçат редакцийĕнчен 1938 çулхи йăнăр уйăхĕнчен пуçласа пынă 56 жалăбăран 23 жалăбă тĕрĕсленмесĕр выртаççĕ, 7 жалăбăна çухатнă. Зоотехник пулса ĕçленĕ Михайлăв ĕççыннисен жалăбисене ӳсĕрпе çухатса пĕтернĕ. Унăн аллинче Лигвинăв йăчĕпе тăракан тата „Комбайн" колхозсенчи ситмен лĕхсем, Сталин йăчĕпе тăракан колхозри йĕркесĕрлĕхсем çинчен çырнă жалăбасем пулнă.

Чапайĕв йăчĕпе тăракан колхозра йăровизаци тунă тырра çĕртсе йăнă çинчен çырнă жалăба май уйăхĕнчене тĕрĕсленмесĕр выртать.

Райçутĕç пайенче 10 жалăба 4—5 уйăх хушши тĕрĕсленмесĕр выртаççĕ. Районри сыхăну пайне Хурамалти сыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕн Константинăвăн йурăхсăр ĕçĕсем çинчен Д. колхозник ниҫҫ уйăхĕнчех жалăба çырса панă. Сыхăну пайĕн начальникне Иванăлĕв йулташ вăл жалăба тăрăх халĕ те нимĕн те туман.

Дм. Михайлăв.

Вунă кун хушшинчи ĕçсем мĕн кăтартса пачĕç

Чукунçул строительствинчи сташанăвла çирĕмкунлăхăн малтанхи вунă кунĕ нумай ӳсĕмсемех памарĕ. Çак вунă кун хушшинче строительствă ĕçĕсен çулталăкри планне тултарассине 2 процент, çеç хăпартăç. Çулталăкри планă сентябĕрĕн 10-мĕшне 59,4 процент тултарнă пулсан, сентябĕрĕн 20-мĕшне 61,4 процент тултарнă кĕртнĕ. Çавăн пек начар ĕçлени строительствă руководителĕсем, партине проф ойуз организацисем, стахановла çирĕмкунлăха-пысăк пахалăхпа иртерегишĕн ответлăха туйса, ĕçлеменнинчен килнĕ.

Çирĕмкунлăх пуçланнăранпа строительствăра ĕçлекенсен хисепĕ чылай ӳсрĕ. Вĕсене ĕçре лайăх организацилеес, вĕрентесе, пулăшса пыçăн пулсан, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пысăк майсем пулнă. Анчах строительствăра ун пек туман. Шупашкар станцине тунă çĕртсе çĕр чавса турттакансем хушшинче ĕçе йĕркелĕ организацилемен. Çавна пула унта ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕк, продсойсем нумай пулаççĕ Кунашкал фактсем ытти участкăсенче те пур. Виҫҫĕмĕш участкăри 29 çынтан тăракан Сорин йулташ бригали сентябĕрĕн 20-мĕшĕнче 8 сехет хушшинче 8 çĕрте ĕçленĕ. Кунта, паллах ĕç тухăçлăхне ӳстересси çинчен каламаç та çук.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерме колхозниксем ҫĕкке вăхăтлăха çеç ĕçлеме пыни те чăрмантарать. Ик-виҫĕ кунлăха ĕçлеме пыракан колхозниксем ĕç меслечĕсене те вĕренсе çитĕнмеççĕ. Çавăнпа вĕсем нормăна тултараймаççĕ. Иккĕмĕш участкăра кашни рабочи пуçне 23 тенкĕ те 10 пуслăх ĕçсем тумала пулсан, халăхи вăхăтра 10 тенкĕлех аннăх тавăççĕ.

Стахановла çирĕмкунлăх тапхăрĕнче пурнăçа кĕртсе çитмелли ответлă ĕç вăл—лини çине хăйăр сарса çитересси пулать. Ку ĕç те начар пырать-ха. Хăйăр турттарас пăхăнă пăрăнтă та тултарман, Сентябĕрĕн 19-мĕшĕнче 48 процент, 20 мĕшĕнче 90,7 процент çеç тултарнă.

Политикăла-масăлла ĕçе организацилес тĕлĕшпе те партине профсойуз организацисем начар ĕçлеççĕ-ха. Политикăла-массăла ĕç пăхăнни куна рабочисене, колхозниксене плана тултарса ĕçлессишĕн кĕрешме мобилизацилекен вăй пулса тăмăн. Суту-илу организацисем йăпăх ĕçлеççĕ. Лаптăксенче кирлĕ таварсем сителексĕр. Час-часах сакăр та кирлĕ чухлĕ пулмасть.

Чукунçул строительствинче стахановецсемпе ударниксем сахал мар. Вĕсен йышĕ стахановла çирĕмкунлăх пуçланнăранпа тата та ӳсрĕ. Иккĕмĕш участкăра çирĕмкунлăх пуçланнăранпа 77 çын стахановецсен ретне, 81 çын ударниксен ретне тăнă. Виҫҫĕмĕш участкăра стахановецсем 9 çын çеç пулнă, халĕ 24 çын. Унсăр пуçне ударниксем 25 çын шутланаççĕ. Вĕсем пурте ĕç тухăçлăхне куллен кун ӳстерсе пыраççĕ.

Çавăн пек иккĕмĕш участкăри çĕр чавнă çĕрте ĕçленĕ Лăвренев йулташ бригали 10 кун хушшинче вăтамран норăна 207 процент тултарнă. Кравцов йулташ йĕртсе пыракан бригада (14 çын) 205 процент, Трушин бригади (5 çын) 208 процент тултарнă. Виҫҫĕмĕш участкари Мефодиев бригади (12 çын) 225 процент пурнăçа кĕртнĕ. Уйрăмăшăн пĕрремĕш участкăри каменщиксем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ Цветковпа Кузнецов бригадисем хăшпĕр кунсенче норăна 300 процент ытларах тултараççĕ. Çав участкăра ĕçленех Живулин йулташ сентябĕрĕн 20-мĕшĕнче норăна 370 процент тултарса, 47 тенкĕ те 85 пус ĕçлеее илнĕ. Вĕсен опытне сарассине организацилемелех.

Стахановла çирĕмкунлăх иртсе пырать. Çак кунсенче пĕтĕм ĕçе стахановла организацилесен чукунçула вăхăтлăх эксплоатацине памали ĕçсене пĕтĕмпех туса çитерме майсем пур. Чукунçул строительствин руководителĕсен, партине профсойуз организацисен, инженерла-техникла работниксен пĕтĕм стройка ĕçне çирĕп йĕркене тăрăх туса пымала. Пĕр участкăра та графиксăр ĕçлени пулмала мар.

Районсенчи партине совет организацисен строительствăра ĕçлеме ĕç вăйне кирлĕ чухлĕ организацилемелле. Строительствăна ĕçлеме пыракансем хушшинче политикăла-массăла ĕçе вăйлатма пулашса, ĕç тухăçлăхне хăвăрттăн çеклемелех.

М. Куçмин.

Ĕçлекенсен хисепĕ ӳсет

Çĕрпӳ районĕнчен чукунçул строительствинче ĕçлеме кайакансен хисепĕ çак йулăшки кунсенче чылайах ӳсрĕ. Стахановла çирĕмкунлăхăн виҫҫĕмĕш кунĕнче иккĕмĕш участкăра 400 çын ĕçленĕ пулсан, сентябĕрĕн 19-мĕшĕнче 700 çын ĕçленĕ.

„Социализăм çулĕпе" тата „Камай" колхозсенчи пынă колхозниксем ĕçре ӳйрăмăнах пăха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, „Социализăм çулĕпе" колхозран пынă Антонăв йулташ бригади (бригадăра 32 çын) кашни кун плана 190 процент тултарать.

Строительствăра ĕçлекенсем ĕç хыççăн вăхăта культурлă иртереççĕ.

К. Михайлăв.

Ĕçе йĕркелемен

Чукунçул строительствинче ĕçлеме колхозниксем пысăк хăваласпа пырăнаççĕ, Вĕсем стахановла çирĕмкунлăха хутшăнса, чукунçула вăхăтлăх эксплоатацине октябĕрĕн 1 мĕшĕнче парассишĕн тăрăшаççĕ.

81-мĕш километртри трубана тунă çĕртсе куллен 100 çын ытла ĕçлет. Унта пуринчен ытла Шаханкан районĕнчи колхозниксем. Анчах йăлсенчен килекенсене вăхăтра ĕç парса, ĕçе тĕрĕк йĕркелеса пымаççĕ. Сăроймăстăр Йĕрмоченкко йулташ ĕçлĕкенсене ĕç çинчен ăнлантарса памасăр. Туса пĕтернĕ ĕçсене те вăхăтра шута илсе пымасăр.

Кунти тепĕр ситменлĕх вăл — рабочисене нурăнма условисем туса паманни. Икĕ палатка пур. Вĕсенче рабочисем пурте вырăнсăймаççĕ. Çавна пула ĕçлекенсем ирĕкре выртса тăрса нурăнаççĕ. Мăшăу йăлинче суту-илу ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе тăтăлма ĕçсем туман, тума та шутламаçăт-ха.

Н. С.

Пĕр колхозран 54 çын

„Алино" колхоз членĕсем (Ишлей р.) чукунçул строительствинче тăрăшса ĕçлеççĕ. Халĕ ку колхозран чукунçул çинче 40 çын çуран тата 14 çын лашапа ĕçлеççĕ. Вĕсенчен çурри ытла самăрлăхсем.

Г. Ошманъ.

Вут-кăварпа выльăни

Йĕвропă шиклĕ кунсенче пурăнать. Англие Франции влаçа йĕркене пыракан сынсем пĕлес тăрсах килĕшӳ панине Германи фашисчĕ Чехословакине тытăкăн-тытăкăн пайлама, унран Судет облăçне туртса илме хатĕрленет. Çак тĕлевле пурнăçа кĕртес тесе Германи фашисесем пур майсемпе те усă курассĕ: шантăк тăвассĕ, йăнаса хăратассĕ, хăйсен генлейина агентури Чехословакки сĕршывĕнче ишелетрĕç ĕç туса пырат тата, йулăшкинчен, Чехословаки правительствине хирĕç генлейĕвсесем ӳссăнах пăлхав, путч турĕç.

Йăт сĕршывсене туртса илес политикине Германи фашисесем „тавлăх" çинчен, Германине Версаль договăрĕнчен „хăтарасси" çинчен сухрашнине витӳçĕ. Анчах тĕрĕссине каласан, сăмах Версаль çинчен пымасть. Версаль договăрĕ тăрăх Германи малтанхи территорийĕ пĕр пайĕ Франци аллине ӳнине (Елзас-Лотарингине), пĕр пайĕ—Дани аллине (Сурçĕр Шлезвиг), пĕр пайĕ — Польша аллине (Польша коридорĕ текенскер) куçнине пĕтĕм тĕнче пĕлет. Германи колонийĕсем пурăнчен ытларах Англи аллине кĕрсе ӳкнĕ. Версаль договăрĕ тăрăх Чехословаки аллине Германи çĕрĕн пĕр ҫурăмĕ те куçманнине çавăн пекех пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Кăçал Германи фашисчĕ туртса илнĕ Австри Германи составне кĕнĕ пекех, Чехословаки те Германи составне кĕмĕн.

Германи Чехословаки сине таăмма шутланнине чăнлăха сутăтса тăракан çак пурте пĕлсе тăракан фактă ăнланнăне дипломатиле суйа хăйсемпе те сирсе ăвма çук.

Германи фашисесем—Судет облăçĕ вĕсене „наципе пĕрлехе" пурăнăçа кĕртнĕ кирлĕ, тесе ĕнентереççĕ. Çак „наципе пĕрлехе" пурăнăçлас тесе пулмала, кантăрăк Тирольре немĕç халăхне нации ĕнтĕчен пуçмăрлакан Муссолинине Гитлĕр йăпăлтатса пуранать. Пурте пĕлеççĕ, „наципе пĕрлех" сăмахĕ çинчен илемлĕ сăмахсем калаппине Гитлер Йĕвропăри государствăсен чикки-сене вăйпа пуçмăрласах вакласа пĕтерме хатĕрленнине витсе тăрать, çакăншăн ăна Англири консерватăрсем тата вĕсен Франципи тусĕсем ырласçĕ.

„Наципе пĕрлехе" çавăн пек майпа пурăнăç кĕртни тĕнчене ăç та илсе пыма пултарнине тавçăрса илеĕр. Чехословаки республикĕн пайе ӳсса тăракан Судет облăçĕнче пайăн мĕçе нимĕç тата мĕçе чехословак пурăннине шутласçĕ пулсан, вара ырăн çавăн пек шăтăу сем ырăкпине çăмăлланах тухса тăма пултараççĕ, вăл шăтусем Англине Франципи влаçа йĕртсе пыракан çынсемшĕн лайăхах пулмĕç Сăмахран, çакăн пек шăту та интересла: Индире англичансем мĕçе процент пурăнăçĕ, Индо-Китайра ĕç Мароккора французсем мĕçе процент пурăнăçĕ т. ыт. Лайăх пĕлетпĕр, çав процент питех те пысăк мар. Пурте пĕлеççĕ, Англине пăхăса тăракан Палести-нăра англичансем пĕчченшĕн çеç шутланăçĕ. Пĕтĕм тĕнчери договăрсене пăхмасăрах, Индине Бри-тани империнчен, Индо-Китайа—Франципе т. ыт. татса илесси çинчен шăту кăларса тăвăртан, мĕнле пулаî вара? Англине Франципи влаçа ĕçртсе пыракан çынсем çакăн пек вымăçсем патне пыма хатĕрехӳссе кайаски патне илсе пырат. Каварлашу хакĕ кашни хутĕнчех ӳсет. Халĕ ĕнтĕ çавăн пек хаклăл —Германи хăйĕн территорине кăнтăр-хĕвелтухăç йĕннеле сарса пыма çĕрте, Гитлĕрăн йăт сĕршывсене туртса илес тĕлĕшпе тунă малашнеки планĕсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте чăрмав вырăнĕнче шутланакан государствăва никама пăхăнмасăр пурăнассине пĕтерсе ӳрсе, ăна пайăн-пайăн валеçесси пулса тăрать. Çакăн пек лару-тăрура саккунлă шăту сиксе тухмасăр тăма та пултарăмаçт: ăçта кайса кĕчĕç пĕтĕм тенчери договăрсем тата вĕсем мĕн ҫак тăрассĕç, пĕтĕм тĕнчери пăхăнăçлă хăй пур-и йĕ вăл „хут таткисем" купи пулса тăчĕ? 1914 çулта, Кайзер çăресем, Парижне Лондăна хăратсă, „рейтралле" Бельгине лавпă пек кĕрсе кайсан „иккĕмĕш империи" канцелярĕ Бетман-Гольвег пĕтĕм тĕнчери правăна çавăн пек „хут таткисен" куçĕн тесе калаçă.

„Демократиле" державăсем йĕнчен фашисла вăрă-ҫураха хавхалантарса пынине пула, пĕтĕм тĕнчери правăна пăхăнса тăрасси сайра хутра çеç пулакан йăпала пулса тăрать, пĕтĕм тĕнчери обйазательствасене пăсни—штăрах та штăврах правилăна кĕрсе пырать. Пĕчĕк государствăсен, Аветрине Чехословаки примерĕсене хăйсен кусĕсемпех курса, хăйсене фашисла захватчиккем тапăнассинчен сыхлас тĕлĕшпе Англине Франци панă сăмахсене сахалрах та сахалрах ĕненеççĕ.

Чехословакине хирĕç поход тунă çĕре Польшăри влаçа йĕртсе пыракансем активлăн хутшăнаççĕ. Гитлĕрăн Судет облăçне туртса илес планĕсене, Чехословакине тытăкăн-тытăкăн валеçес планĕсене, пĕтĕм тĕнчери договăрсене тепĕнпех пĕтерсе хурас планĕсене Польшăри реакцилĕ пичет сухрашнăн пулăшать. Судет нимĕçĕсен тата Чехословакири ытти вак халăхсен правĕвисем çинчен сухрашса, Польшăри реакцилĕ пичет Гитлĕр майлă йурлать. Çав вăхăтрах, Польша государственăлла Украинăна Белоруссипи облăçĕсенче миçе польак пурăннине шутласа пăхсан, çавăн пек шутласа пăхнин резуйтачĕ те нарăс пулмĕ.

Совет Сойузĕ — пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне, пĕтĕм тĕнчери правăна хăрушăсăрлăх ĕçе çирĕп те вĕçне çитийех хӳтлекен пĕртеннер сĕршыв. Хăйĕн тирриторийĕнче кирек мĕнле чуралăха та пĕтерсе хунă пирĕн сĕршыв кирек мĕнле нацилĕ тата колонилĕ чуралаватрассине те татăкăлнах хирĕç пырат. Пĕр-пĕр колоюире, пĕр-пĕр пăхăнса тăракан государствăра мĕнле империалисла тискер-кайăк хуçалăнса пурăнни çине Совет Сойузĕ йăпăлăн пăхат, мĕншĕн тесен, вăл Германи ĕç Англи тискер капăкесем хушшинче нимĕнле уйрăмлăх та сукмăк çукрĕ. Анчах, çак шăтусем хĕвелăнăç Йĕвропăри „демократиле" государствăсемшĕн пурнăçех пулма пултараймаççĕ. Чехословаки тĕлĕшпе вăрă-ҫураха ĕç тунине килĕçсе, çав вăрă-ҫураха ĕçе пиллесе, Англине Франци вут кăварпа выльăççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен умне „демократиле" государствăсене пăхăнса тăракан Азисе Африкăри хăшпĕр „обйазсем" тĕлĕшпе ырăн çав мăтусенех кăларса тăратма пултараççĕ.

(„Правда" умăтăн, сентябĕрĕн 21-мĕш).

Нурăсри педучилишчăра

1937—38 вĕренӳ çулĕнче Нурăсри (Вăрнар р-нĕ) педучилишчăра вĕренӳне воспитани ĕçĕ ытла та начăр пулвă. Кĕркунне-ҫи пĕлӳ тĕрĕслеве хăваринсем, пĕр класах иккĕмĕш çула йулинсем нумай пулнă. Ĕç çав тери начар пулни пĕтĕмпех преподавательсенчен тата директорăран — Олангайĕвран килнĕ. Вĕсем ачисене ситĕлекĕ пĕлӳ парассишĕн тăрăшса ĕçлемен.

Педучилишчăра кăçалхи çул ĕç йăлтах урăхла тăрать. Педучилищ вĕренӳ çулне чылай пысăк ĕçсем тунипе кĕтсе илчĕ.

Вĕренӳ пахалăхне хăнăртас майпа, кашни вĕренекен пĕр-пĕринне социалисчăлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Кашни кун политинформаци пулать. Политинформаци иртерме комсомолĕ-ҫулăçĕсене сăрĕлтернĕ. Классенче стена хаçачĕсем йĕркеле тухса тăраççĕ.

В. Арçентьĕв.

Лигă наци пленумĕнче

ЖЕНЕВА, сентябĕрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Пайан Лига наци пленумĕн выҫлăмĕш комиссийĕ ларăвĕнче (хĕрлăшаллăнассине чакарса пырас ыйтăусем тăрах) граждăнла халăхсем сине сывлăшран бомбăсем парахас ыйтăва малалла сӳтсе-явнă. Çак ыйту тăрăх Испани делегачĕ Аскарате, Британи правительствин Испанире çавнашкал бомбăсем парахнисене тĕрĕслеме çар специалисĕсенчен туна комиссии опычĕне усă курма сенне. Ун вырăнне Британи делегачĕ Уоллес—йăтарлаca туна технически комиссине „сывлăшпи вăрçăн правилисем" йăтлă кодекс хатĕрлесе пама хушма сенне, вăл кодекс тăрăх граждăнла халăх сине сывлăшран бомбăсем парахасси секкунсăр ĕç пулмалла. Уоллес çапла каланипе Киссен (Франци) тата Патин (Голланди) килешне. Веллингтон Ку (Китаи) Испани сĕнĕвепе килешсе, пур государствăсем те Японине çар самолăчĕсем тата горăчи парса тăрассине чарса лартма ыйтнă. Испани сĕнĕвепе çавăн пекех Нерво та (Мексика) килешне. Пленума тăратма килешӳлĕ сенӳ хатĕрлеме, Великобритани, Франци, Китай, Испани тата Греци представителĕсенчен подкомиссии туна.

Англи кабинечĕн ларăвĕ

ЛОНДĂН, сентябĕрĕн 21-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пайан Англи кабинечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ, унта халăхи вăхăтри тĕнчери лару-тăру çинчен сӳтсе-явнă.

Ыран иртнине Чемберлен Берлина вĕссе кайăт. Бердинра вăл пĕр ик-виç кун хушши пуранмала. Чемберленпа перле Англин йăут çĕршыв ĕçĕсен министерствин права ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен советникĕ Виҫăам Малкин каймала.

Пайан каçхине Чемберлена король йышăннă. Ун хыçăн Чемберлен Англи лейборисĕсен лидерĕсемпе—Ттлипе тата Гринбудпа калаçнă.

„Вячеслав Молотов" пăрçĕмрене тăвакансен çитĕнĕвĕ

ЛЕНИНГРАД, сентябĕрĕн 20-мĕш. (ТАСС). Орджоникидзе йăчĕпе тăракан савăтра, Андрейĕв йăлтăн бригадинчи чи лайăх сборщиксен пуçăраввĕпе, Октябрь уйăвĕ уменки социалисăмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырат. „Вячеслав Молотов" йăтлă çав тери вăйлă икĕмĕш пăрçăмрене туна сĕрте—халиччен пулман производствăла çĕкленӳ. Терлĕрен специалăнаçпа ĕçлекен рабочисем хăйсем ушшиниче мала тухассишĕн кĕрешеççĕ.

Ăмăртура малти вырăна Андрейĕв тата Волокин йăлтăшсен бригадисенчи сборщик-стахановецсем йышăнаççĕ. Вĕсем кашни кунах икшер-виçшер нормă тултараççĕ.

Хроникă

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ А. П. Гагарин йăлтăша ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи вслă шкул ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузри комитечĕн председателĕпе замещительĕ пулма çирĕплетнĕ. (ТАСС).

Суйлавçăсен наказне пурнăçламан

Çĕрпӳ хула советне суйланă чухне суйлавçăсем мунчăтума наказ парса хăварманччĕ.

Хула совечĕ ку наказа хăҫ те пурнăçламан. Хулара педагогика училищи, фельдшĕрсен шкулĕ, йăлхуçалăх техникумĕ, ăтăм шкул, тӳме савăчĕ тата ытти организацисем те пур. Вĕсенче темиçе çĕр çын вĕренет, ĕçлет. Вĕсене темиçе çĕр кирлĕ.

Хулари ĕççыннисем хула совечĕн коммуналлă хуçалăх пайне мунча тума хушăççĕ.

Г. Шумилăв.

Пĕр нус та пухман

Шăмăршă районĕнче укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен йăлсовечĕсем чылай. Микшин йăлсовечĕ çентябрĕн 10-мĕшне виççĕмĕш квартăл планне 98,8 процент тултарна. Налог агенчĕ Воронцов йăлтăш пĕрмайăх активпа, унăн секци членĕсемпе пĕрлĕ ĕçлет. Йăлсовечĕ те налог агентне ĕçре пулăшса пырат. Çапла ĕçленине пула „Космовский" колхозра займа 2.240 тенкĕ, „Заря свободы" колхозра 1085 тенкелĕх сыранса 610 тенкĕ, „Маяк революции"—1,900 тенкелĕх сыранса 1000 тенкĕ укçа тӳленĕ.

Анат Чаткас йăлсоветĕнчи „Триер" колхозра займ укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Анчах та Шăмăршă районĕ укçа-тенкĕ пухас плана квартăлтан квартăла тултарса пыраймасăр-ха. Ĕçе организацилеме пĕлменнинне пула, район виççĕмĕш квартăлта та кайа йăлса пырат. Çĕнĕ Чукал, Кивĕ Чукал, Патирек, Пачăрла Пашĕел, Васан йăлсовечĕсенче укçа пухассине пĕтĕмпех налог агенчĕсем сине шанă. Йăлсовечĕсем ку ĕçрен уйăрăлса кайнă. Финанс секцисем хут çинче çеç шутланса тăраççĕ.

Уйрăмăнах ирĕклĕ тӳлевсем йенĕпе укçа начар пуханат. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх займ укçи пухас плана 16,6 процент çеç тултарнă. Патирек, Васан, Çĕнĕ Чукал, Кивĕ Чукал йăлсовечĕсенчи займ уполномоченнийĕсем займ укçи пухассине пачах та ĕçлемеçĕç. Ку йăлсоветсенче йăлашки вунă кун хушшинче займ укçи пĕр пус та пухман.

М. Иванов.

Вутă хатĕрлессине манмала мар

Трак районĕнчи чылай шкулсем пайăнки кунченевех вутăсăр лараççĕ. Хĕллехи каникулчен хутмалăх вутă хатĕрленисем районĕнпе те 7—8 шкултан ытла мар.

Хĕллене хатĕрленесси сине сутăç пайĕ çителĕклĕн çăвăрăнса пăхмасăр. Шкулсен заведуйăвшийĕсем тата директăрĕсем те ку тĕлĕшпе нимех те тумаççĕ. Вĕсенчен хăшĕпĕрисем: „Акă, чукунçун пулат, пуйăспах кӳрсе парĕç", тесе лăпланса лараççĕ.

Хусакасси тата Вутлан шкулĕсенче вутă ыыр вĕртмелĕх те çук. Ачасем чĕлĕ ыыр ĕçеççĕ.

Трак районĕнчи сутăç пайĕн хĕллене хатĕрленес ĕçе хăвăртлатмала.

Вас. Ива ншков.



Мускаври Л. М. Каганович йăчĕпе тăракан метрополитенăн Горький радиусĕ

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Белорусская" станцин эксплуатăрлă залĕ.

Б. Игнатович фото-ӳкерчĔкĕ (Союзфото).

Иван Ивник

Çирĕм ултта

Кăн-кăвак ларман ун чух çирен,
Йӳрланман пахчаçă-шăпăк шукăль:
Тертлĕ вăхăт урлă кунсерен,
Вăхăт пулнă тамăкран та шуха.
Типĕ çил хăйрана хăйăра.
Тинĕсре хумсем шавланă урлă...
Тен вĕсем кунта кăшт кайăрах
Йӳн шăрши пăсланассине туйнă.
Пуш хирте кĕрмасĕ пит тискер,
Ку сĕм кас пулса тискер тата та,
Красноводск пăлханнă сĕрпĕхе,
Вăл пăлханнă вăрттăн, ниме сассăр.
Унтан кайнă кĕçĕр ĕмĕрнех
Вĕри йунăл 26 паттăр.

Ешелон васкаç. Васкаç питрех.
Ак, йулашки çухрăм, 207 ..
Джонсон йăнă чунилли отрет,
Ку тĕле вăл кĕтсе пынă пит те...
Çирĕм ултă паттăр çаканта
Акăлчан пăшалĕнчен тĕп пулнă.
Çавăнпа çак çухрăм, çавăнпа
Пайан кун та курăнат-çке йунăлăн.
Кун-çулсем чупаççĕ васкасах,
Вăхăта мĕн, унăн ĕçĕ йăнтă.
Анчах çак йун ĕмне сĕм кăçа
Манас çук етемлĕх нихăçан та.
Çирĕм ултă лулĕ чĕрере,
Ăна ĕмĕр мынĕ ĕç тĕнчийĕ.
Йăнăра ес, йурă, вирлĕрех,
Ес çӳре çĕр çийĕн, тинĕс çийĕн!

Художествăлă пултарулăх кружокĕсем

Шупашкарти стройкăра художествăлă пултарулăх кружокĕсем ĕçлеме пуçларĕç.

Стоҫаров куçтработник тăрăшнипе чăваш драмкружокĕ, вырăс драмкружокĕ тата хĕллехи оркестр организацилеме. Çак кунсенче чăваш драмкружокĕ Айзманăн „Çупçипе хупăлчи" комедине лартса пачĕ. Кураканссем кружок членĕсен пултарулăкине ырларĕç. Ку кружока охранник Дмитрийев й. йертси пырат. Кружокра пурĕ 31 çын.

Ситес кунсенче чăваш драмкружокĕ „Унта кунта" пĕесăна, вырăс драмкружокĕ „Маску долой" пĕесăна лартса пама хатĕрленеççĕ.

Ĕç хыçăн кашни каçах кружок членĕсем пухăнса репетицисем туса иртереççĕ. Хĕллехĕ оркестрăн пĕр байан, 3 гитарă, 2 мандолина, 3 балалайка тата ытти инструментсем те пур. Анчах ку инструментсем çителĕклĕ теме çук. Кашни çын ваҫҫăн инструмент кирлĕ, хаҫ вĕсем çителĕксĕр.

Художествăлă пултарулăх кружокĕсене республикăри халăх пултарулăх çурчĕ вырана кайса пĕесĕсемпе, париксемпе, гримсемпе тата ытти кирлĕ йăпаласемпе те пулăшса пырат.

Н. Амурцĕв.

Çулавăçри вулав çурчĕ

Çулавăçри (Елĕк р.) вулав çурчĕн пуçлахĕ И. Филиппăв йăлтăш хăйĕн уменчи задачăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлет. Хаçат-журнал çителĕклĕ çырăнса илнĕ. Хаҫ çеç библиотекă ваҫҫăн Филиппăв йăлтăш 135 тенкелĕх çĕнĕ илемлĕ литература кĕнекисем илчĕ.

Колхоз çамрăкĕсемпе колхозниксем пушă вăхăтра вулав çуртĕнче кĕнеке, хаçат-журналсем вулаçа, йе шашкă-шахмăтла выҫăса вăхăта савăнăçла та кулăтуралă иртереççĕ.

Филиппăв йăлтăш вулав çуртне пухăнă колхозниксемпе йединоличниксене ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççи йышăнă саккунсем çинчен ăнлантарса парат.

Анчах çтена хаçачĕ кăларас ĕç йăлса пырат.

Н. Йăжуткин.

Мотоциклет туйанаççĕ

Иртнĕ çулта Тутаркас районĕнче пĕр мотоциклет та пулмăн. Кăçал учреждениссенчен ПСК(б)П райкомĕ, Мосзаготторг мотоциклет туйанă. Нумай пулмасть Йункăри тулăлимар вăтам шкулта ĕçлекен Филиппăв учителĕ 3600 тенкĕ парса мотоциклет илчĕ.

Мотоциклет илме колхозниксем те заявкăсем парассĕ.

М. Исаĕв.

Йалти пекарҫă

ИЕТĔРНЕ. 1937 çулта Пăлтай йăлповĕ çумĕнче пекарҫă çурĕç. Малтанхи вăхăтра пекарҫă начар ĕçлетчĕ: пекăрсем çăкăрсене йăланах тăм пек тачка пĕçеретчĕç.

Йулашки вăхăтра пекарҫă пит аван ĕçлеке пулчĕ. Çăкăр пахалăкĕ аван. В. Пчелкинпа Е. Васильйăн пекăрсем талăкра 4—5 камака çăкăр пĕçерсе калараççĕ, нормăна 150 процент таран тултараççĕ.

И. Чиндыков.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ЧĂВАШ АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне
аслă бухгалтĕр, бухгалтĕр, экономист-финансист, машинисткăсем
КИРЛĔ
Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн ĕçĕсене пăхаканĕнчен ыйтса пĕлмелле

ЧĂВАШСЕН Коммунисла йăлхуçалăх аслă шкулне
МАШИНИСТКĂ КИРЛĔ
Адрес: улица Ленинградская, д. № 3.
РЕКТОРАТ.

КОГИЗА
ПЛАТНИКСЕМ ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ
Горький урамĕнчи 5-мĕш номĕрлĕ çуртра ыйтса пĕлмелле.

ШУПАШКАРТИ ВЕНДИСПАНСЕРĂН
çĕрлехи профилакторийĕ
(Поликлиникă киликартинче)
КАШНИ КАÇАХ
12 сехетрен пуçласа ирхине 6 сехетчен ĕçлет
4—4

СССР ФИНАНС ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН
ПĔТĔМ СОЙУЗРИ ЗАОЧНĂ ВĔРЕНМЕЛИ
ФИНАНСПА ЭКОНОМИКĂ ИНСТИТУЧĔ
вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Институтăн вĕренĕсе тухса государствăн экзаменĕсене панисем диплом тата стационарлă финанспа экономика институтĕсенчен тухнисем мĕнпур прависене илеççĕ.

Институтра тӳлевсĕрсен вĕрентеççĕ. Тăвата çул çурă вĕренмелле.

Института 17 çултан иртнисене, вăтам шкулран, техникумран, тата рабфакран вĕренсе тухнисене тата екстерн йĕркипе вăтам шкулран вĕренсе тухнине çинчен аттестат илнисене илеççĕ.

Института кĕрекенсем аслă шкулсене кĕмели йĕркессемпе килĕшӳлĕн испытани тытаççĕ.

Института кĕме ыйтса заявленисене институт директăрĕ йăчĕпе çак адреспа йăлмала: „Москва, центр, улица Куйбышева, 9, йе Казанский учебно-конторăвпăтпонный пункт, ул. К. Маркса, 43, 4-й этаж, комната № 61, К. Ф. Э. И. им. В. В. Куйбышева. Кунтах проспект, заявлени формине тата ытти справкăсене те ямле пулат.
3—1

КОЛХОЗСЕНЕ, СОВХОЗСЕНЕ,
Лашапа сӳркен транспорт организацисене,
КОЛХОЗНИКСЕМПЕ ЙЕДИНОЛИЧНИКСЕНЕ
ПĔЛСЕ ТĂМА
Çентябĕрĕн 15-мĕшĕнче
лашасен çилхисемпе хӳрисене касмали вăхăт пуçланчĕ
ЛАША ÇИЛХИПЕ ХӲРИ
ПРОМЫШЛЕННĂСПА ЭКСПĂРТШĂН
ХАКЛĂ ЧĔРГАВАР.
Лашасен çилхипе хӳрине касăр!

Каснă çилхене хӳре хĕллехе Сойуззаготкожа, потребительсен кооперацине (йалпо) тата Сойузутил организацисене парăр.

Союззаготкож

Денатурат наркăмăш, ăна ан ĕçĕр!

Денатурат наркăмăшлă çинрт, уй çинче наркăмăшлă йăпаласем — сывушшăн çу хăт хушши йе вăрахчен асапланаççĕ. нумай хутшăтнăрăн. Савăнăç та-ăна ĕçме йурăмаст. Денатурат çинче наркăмăш пурри. вăл çынăн организмне сывлăш пурнишĕн те палăл пултăр тесе, ăна темиçе тĕслĕ шурăммала туса калараççĕ.

Государствăна денатурата хуçалăх ĕçĕнче тата техникăра çунтарма кирлĕ йăпаласем вырăнне каларăт. Самăрăн: принуждсем чĕртме х. мт. те. Медицинăра врачсем унпала (операци тунă чух тата урăх ĕçре те) аласене, ӳт-тире дезинфекци тума усă курăççĕ.

Йулашки ик-виçĕ çул хушшинче денатурата çунтармали йăпала вырăнне ирĕклĕнех сутнине кура, ăна хăшпĕр çынсем ерех вырăнне ĕçни палăрчĕ.

Савăнăç та енĕ ку статьăвра тĕрлĕ спирт тавраш, уйрăмăнах денатурат ĕçни çынăн организмĕшĕн мĕн пек пысăк сийĕн кӳни çинчен чарăнса тăрасшăн. Ĕçке вĕрсе кайни, питĕ хăйăр ерексене йăлăнах ĕçни çынăн чĕрĕ клетчаткине сунтарни çинчен, варкăрăма вăйлăн чирлеттерни йе вăл чирсем çынна вĕлерме те пултарни çинчен ниукă-тавçăнах кăтартса памăн. Кăна епĕр ерех тавраш хăвăр ĕмĕр те пĕрреммĕн хутчен ĕçиĕ хыççăн икшер-виçшер пулмă пулатарăт. Врачсем хушшă тăрăх кун хушши йĕн пăтранса сĕрешеннем йе йăкă мĕнле йышши спиртăл йăпаласене: варкăрăма пулнинчен тата пыршăсем ыраттăр кефир, хумăс, виноградран туни ерехнинчен дейăх чухлаха кăмпа пултаратăпăр. сем, хура сăра. сайра хутра тата таса. Сакăн. хыççăн кашнийĕх мар пулни те, спирта (сывушшăн су сахал пулсан сес) шывпа хутăштарнине ĕçме пулат.

Ĕçмели спиртăл йăпаласем йуна питĕ хăвăрт саланаççĕ. Савăнпа та ерех тавраш ĕççен çын малтанах хăйне-хăй вĕсем-сĕр хăвасăлă пек туйат, „паттăрланат", мухтанма тытăнат. Хăш-пĕрисен апат çиĕс кнлни ӳсет. питĕ нумай калаçас килет. Кайăрахпа çын йĕркерени тухса кайăт, сапкаланма пуçлат, пĕр сăмахпа калаçан, кирек мĕнле ирĕсĕр ĕç тăвасси умĕнче те чарăнса тăмн пулат.

Çын мĕн чухлĕ ытларах ĕçнĕ, çавăн чухлĕ йăран кайса пырат. Мĕн пур нервăсен çистеми тата мĕн пур органсем ӳсĕрĕлсе çитсен вара ним туйăн сывăрса кайат.

Çак çулта асăннисем ĕçке йĕрни етем организмĕшĕн мĕн пек сийĕнипе кăтартса памăн çителĕклĕ, тесе шутлатăп. Савăн пек куллен тата нумай ĕçсе ӳсĕрени çынна питех те асапа тăратса хăварма пултарат. Ерех тавраш час-часах ĕçсе пурăнсан, çынăн организмĕ ĕçке хăйăхма пуçлат. Кашни ĕçмессерен çынтрăл йăпаласене ытларах ĕçсе килекен пулат. Мĕн чухлĕ ытларах ĕçетĕн, вĕсем çавăн чухлĕ организмшăн сийĕн кӳрсе, ăна тĕрлĕ чирсемпе кĕрешĕмни туса хурăççĕ. Кăна вăтартса парас тесен. вăрăма кайăкан хырăмăлăх катарĕпе, колитпа, пур тĕслĕ хырăмăлăх чирĕсемпе, невралгипе, чĕре чирĕпе тата мт. те чирлисене темĕн чухлĕ çынна илсе кăтартма пулат.

Спиртăл йăпаласене малтанах „апат анмалăк" тесе тата ытти „сăлтавсемпе" сăвăлăн сайра хутра çеç ĕçсе тăнн те кăпăркăна (чĕлĕм турăпи пек) питех те сиенлĕ йĕнлĕ йăпала ĕçке йĕрни патне илсе пымă пулăпăр.

Ерех ĕçни çынăн малтан пулнă чирĕсене те вăйлатса йăрат. Акă мĕншĕн ĕнтĕ спиртăл йăпаласем ĕçекен çынăн трахом йе урăх куç чирĕ пулсан вăл вăхăтăр суккăр пулат. Начартарах илтекен—илтми пулса ларат. чĕрепе йе ревматисăмпа чирленнисем—инвалид пулма йе вăхăтăр виляме пултараççĕ.

Венерикă чирĕпе чирленисем врач кăтартнă режимпа кулленех сывалса пырсан хăйĕсем чирĕсенчен часах хăтăлма пултараççĕ. Анчах ерех тавраш ĕççен çав кĕске вăхăтрах сывăтма май пур чирсем йăрăма, темиçе çул хушши чăсăлма пултараççĕ. Пе тата сывалмăçăр ĕмĕрлĕхе инвалид пулса йулатăн. Кун пек пулсан вара çынран ача-пăча çурăмли пулат.

Ерех ĕçни йру тĕлĕшпе те пысăк сийĕн кӳрет. Ĕçке йĕрнĕ çынсен ачисем имшер те начар çуралаççĕ, вĕсем часчăсах чирлеççĕ. Кунсăр пуçне тата ĕçке йĕрнĕ çынсен ачисем уйрăмăнах нумай вилеççĕ.

Денатуратлă спиртра çывушшăн çу текен наркăмăшлă йăпаласем нумай пулнине, вăл çынăн организмне мăнтă пур йышши ерексенчен те пысăкрах сийĕн кӳрет. Çывушшăн çу тĕп нерва çистемине пысăк сийĕн кӳме пултарат, уйрăмăнах куç нервисене сиенлеесе суккăр тăват.

Ĕçке йĕрсе кайнă çынна алкоголик, тесçĕ. Алкоголисăм авалхи пусмăрлă пурнăçран йулнă имеш. Çак сийенлĕ йăпала пирĕн хăйăртрах кăлласа тăкăçлăшĕн кĕрешмелле. Ана капиталисăмла обществăран йулнă мăнтă сийенле вăласемпе пĕрлех тĕп тумала.

Врач СТОЛЯРОВ.

„Чăваш Коммунисчĕ" сыраннă вăхăтра: пĕлтĕр уйăхĕн 1 ç. 30 пуҫ. 1 уйăхĕн 7 ç. 60 п. 1 уйăхĕн 15 ç. ултăшăнăн 30 тенкĕ. Подписăна сыхăну уйрăмăсем, писмоносăсем ыышăнаççĕ.

Ухранопочтовый Чувкнигомагаэт № 498

Гор. Чебоксары, типография № 1 заказ № 711, ф. 4. 84×64 с. л.